## Çĕнĕ кĕнекесем

# Мала чĕнекен çутăсем

Анатолий Емельянов хайĕн çĕнĕ калавĕсен пуххине «Кăвайт çутисем» тесе ят пана. Ку вăл çамрăк писателĕн иккĕмĕш кĕнеки. Кăвайт çутисем... Колхозла ял çынисен çутисем вĕсем, совет çĕрĕ çинче ÿссе çитеннĕ телейлĕ çамраклăх çутисем. «Çулсем иртĕç, çак хирсенче кăвайт çеç мар, электричествă çутисем те ялкăшма пуçлĕç. Пирĕнтен пĕр çирĕм çул каярах çуралнисем валли çул татах та сарлакарах та такăртарах пулĕ, вĕсен çутисем татах та хĕрÿрех çунĕç», — тет автор. Çав çĕнĕ çутăсемшĕн колхоз хирĕсенче ырми-канми ĕçлекенсем çинчен çырса кăтартать ĕнтĕ вăл хайĕн çĕнĕ кĕнекинче. Унта пурĕ вун ултă калав. Пуринче те тенĕ пекех геройсем — ялти çамраксем. Казахстана çĕнĕ çĕрсем уçма каяççĕ-и вĕсем, колхоз фермисенче вăй хураççĕ-и, çулсем тăрăх машинăпа çÿреççĕ-и,— пур çĕрте те малта, пур ĕçре те таса чунлă, тÿрĕ кăмăлла, хĕрÿллĕ те пултаруллă, самана хушнине ăнланса ĕçлекенскерсем...

«Кăвайт çутисем» калаври генерал хĕрĕ Санюк, черченке кул-çурăмла та ачаш ÿснĕскер, ниме пăхмасăрах ытти çамраксемпе пĕрле çĕнĕ çĕре ĕçлеме тухса каять, ялта ÿснĕ хĕрупраçпа танах тыр-пул пухать, хăйĕн шухăш-кăмăлне туптать. Ывăр ĕçлесе ывăннипе вăл каçхи апат çиме те хал çитерейместь. Тантăшĕсенчен пĕри ăна «куршункра ÿсекен чечек», — тет. Анчах маттур хĕрен пархатарлă ĕçне витĕр курса тăракан, вăл ывăрлаххсене çĕнсех пынишĕн хĕпĕртекен комсомолец Петĕр çакна хирĕç гавăрса калать: «Куршункри чечек çулталăкĕнех хăрмасть». Çак хитре калавра этем пĕрлешÿллĕ ĕçре телей тупнине кăтартса панă. «Сивĕннĕ шыв» калаври ĕçчен доярка Çинук хай чун-чĕререн савакан каччă Борис колхоз сĕтне сута-сута ĕçке ярăннине пĕлет, анчах этем тивĕçĕ хĕр тивĕçĕнчен аслăрах уншăн, — вăл савниййĕн путсĕр ĕçне тăрă шыв çине кăларать. «Ăн тив, хам намăс курам та, анчах çын ăнăшне тăрă шыв çине кăлармасăр тăма пултараймастăп. Хăрпăр хăй айăпне ăнланса, халăхран каçару ыйтсан, халăх умне чĕркуçленсен, ял-йыш мĕншĕн каçармĕ?» — шухăшлать вăл. «Çултан пăрăнсан» калавра ялти коммунистсем намăс-симĕсе маннă Михалана тĕрĕс çул çине тухма пулăшаççĕ. «Портсигар», «Хавшак ыран», «Сăлтав, ачасемĕр, сăлтав» тата ытти калавсенче те писатель пирĕн вăхатри маттур ял çынисен ырă ĕçне çырса кăтартать.

Кашни калаврах автор çĕре юратни, ял çынисен пурнăçне лайăх пĕлни этемĕн пурнăçри ыранĕпе тивĕçĕ çине кирлĕ çĕрте философ куçĕпе, кирлĕ çĕрте туйăмлă лирик куçĕпе пăхни тата вулакана ырра усаллан уйăрса илме, путсĕрлĕхе питлеме вĕрентни паларса тăрать.

Калавсен шухăшĕ, теллев-йыхравĕ çинчен калаçнă май, пысăк философиллĕ «Тÿме», «Пăрпа пĕрлешнĕ çыран» тата «Çĕçпел çыххи» ятлă калавсене асăнса хăварас килет. Пĕчĕкскерсем çеç кусем, хайне евĕрлĕ прозăлла сăвăсем пек. Анчах вĕсенче кашниййĕнчех пирĕн пурнăçри этем пĕлтерĕшĕ çинчен, çын пурнăç илемĕ, çут-çанталăк хуçи пулнине ытарлăн, çав вăхатрах пур вулакана та ăнланмалла меслетпе çырса кăтартнă.

А. Емельянов — ÿссе пыракан писатель, литературăн анлă аннипе, «Кăшлана çĕр» калаври герой колхоз уй-хирĕпе утнă пекех, çирĕп утăмпа утать. Унăн çырас меслечĕ те, геройсене уçса-сăнласа парас меслечĕ те хăйĕн. Чĕлхи çăмăл, кашни йĕрки — туртамлă, кал-кал вуланать. Кирлĕ выранта ытарлăн çырма та пĕлет вăл: «Хăтана каякан каччă пек савăнна хĕвел», «Çеçсисем кĕрекене ларнă», «Майра тури пек уйăх çеç çаплах пĕлĕт çивĕчĕсене тураре», — тет вăл.

«Кăвайт çутисем» кĕнекене вуласа тухатăн та тÿрех: «Анаçлă конене» тетĕн. Çакна кăна хушса калас килет: Анатолий Емельяновă хăйне те çак кăвайт çутисем малтан мала, çĕнĕ çитĕнÿсем патне чĕнтĕр...

**Юхма МИШШИ.**